26-78

В. М. МОЛĂТТĂВ.

# ПАРТТИН ЙАЛТИ ЂУХĂНСЕМ ХУШ-ШИНЂЕ ĔҪЛЕССИ

ХВЕТУТ НАҪТУКĔ куҫарнă
Ретактăрĕ Н. И. ВАНЕРККЕ

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шулашкар 1927

В. М. МОЛĂТТĂВ

# ПАРТТИН ЙАЛТИ ЂУХĂНСЕМ ХУШ-ШИНЂЕ ĔÇЛЕССИ

1925 çулта, октяпĕр уйăхĕн 8-мĕш кунĕнђе П.С.К.(п.) Парттин Тĕп Комиттеђĕн пленăмĕнђе тунă токлат

ХВЕТУТ НАÇТУКĔ куçарнă

Ретактăрĕ Н. И. ВАНЕРККЕ

ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар — 1926

Типография
„ЧУВАШСКАЯ КНИГА“
Чебоксары, Б.-Советская, 6

Чувашлит № 1072 Напеч. 2000 экз.

## Парттин йалти ђухӑнсем хушшинђе ӗҫлесси.

(1925-мӗш ҫулта, октӑпӗр уйӑхӗн 8-мӗш кунӗнђе П. С. К. (п.) Парттин Тӗп Комиттеђӗн пленӑмӗнђе тунӑ токлат).

Йулташсем, ҫак ҫул хушшинђе Парттин Тӗп Комиттеђӗн пленӑмӗ йалти политтӗк ҫинђен виҫҫӗмӗш токлат итлет. Токлатсемпе решшенисем хушшинђе вӑл ыйту тӑрӑх Парттин Тӗп Комиттеђӗ йышӑннӑ ҫӗрте питӗ ҫирӗп ҫыхӑну пур.

Первейхи токлат Парттин йалти политтӗкӗн сат ђђисем тӗлӗшӗнђен пулсађђӗ. Унтан вара— советсене ђӗрӗ сывлӑш кӳртес лосӑнк.

Иккӗмӗш токлат, пуринђен ытла, екккономӗк ыйтӑвӗсем тӗлӗшӗнђен, унпа пӗрле вӑрҫӑллӑ комунисӑм вӑхӑтӗнђи йӗркесене пӗтерсе, таварӑн ҫавӑрӑнӑҫне вӑйлатасси ҫинђен пулђӗ. Вӑлах тата хӑвӑртрах хресђен халӑхӗн пурнӑҫне ҫӑмӑллатас йӗркесем тупассине кӑтартрӗ (йалхуҫайстви налукне пӗђӗклетесси, йалхуҫайстви таварӗн хакӗсене тӗрӗс йӗркелесси, хресђенсем вађђи ҫителӗклӗ вӑрманпа ҫӗр уйӑрасси, тата ытти те). Паллах ӗнтӗ, Тӗп Комиттет иртнӗ ҫулта октӑпӗр уйӑхӗпе ҫак ҫулта апрел уйӑхӗнђе йышӑннӑ решшенисем Парттин 14-мӗш Конферентсипе Советсен 3-мӗш Сиесӗн

постановленисенђен те палăрса тăраççĕ. Халĕ, йалти политтĕк тĕлĕшпе çĕнĕ решшенисене йышăнса çулталăк иртнĕ хыççăн Парттин йалта ĕçлес курсĕ тĕрĕс пулнăши? тесе ыйтма йурать. Хамăр умри çак çулталăк хушшинђи ĕçсене илсе, епĕр пĕр иккĕленмесĕр вăл курс пĕтĕмпех тĕрĕс, тесе калама пултаратпăр пулĕ, тесе шутлатăп епĕ. Вăл курса епĕр тĕрĕс илнĕ. Ку ђăнах та çапла иккенне йалăн хаљхи политтĕк ĕçĕпе иртнĕ çулти йалти политтĕк ĕçне танаштарсан курăнать.

Ман шухăшпа, епĕр хаљхи йалти политтĕк ĕçĕсем йепле çыхăнса тăнине хакласан, йалта политтĕк тĕлĕшĕнђен ĕçсем аванланнине астумалла, тата йалсенђе Совет влаçĕ çирĕпленнине курмалла. Хаљхи вăхăтра йал пурăнăçĕ çапла курăнать, çапах та епĕр хресђенсем хушшинђе ĕçленĕ çĕрте инкек-синкексем (йăнăшсем) тăватпăр, тата политтĕкпе хуçайствă йенђен те инкексем пулкалаççĕ. Çавах та йал пурнăçне пĕтĕмĕшпе илсен,—йалта политтĕк ĕçĕ пĕђĕккĕн йусанса, Совет влаçĕн авторитteђĕ çирĕпленсе пырать, темелле.

Малалла епĕ йалти пурăнăçăн çав тĕп паллипе пĕрле кăтартма кирлĕ вактĕвек паллăсем çинђен каласа парас тетĕп, ку вактĕвек паллăсене епĕр нийепле те тĕп паллăран уйăрса, татса илме пултараймастпăр.

Анђах малтан, ун çинђен калаçиђђен, епĕр партти хăйĕн политтĕк сатађђисене пĕлтĕрхи октăпĕр уйăхĕнђен пуçласа йалта мĕнле ĕçе кĕртсе

пыни çинђен калаçмалла. Вара епĕр икĕ пысăк утăм курма пултаратпăр. Акă ĕнтĕ первейхи утăм вăл советсене çирĕплетес лосăнк пулаŧ. Вăл пирĕн умра Парттипе Совет влаçĕн авторитететне хресђен халăхĕ умĕнђе, йалти ђухăнсемпе вăтам хресђен умĕнђе çирĕплетесси. Ун хыççăн вара парттин 14-мĕш конферентсинђе епĕр парттипе пролеттариат йала йертсе, çул кăтартса́ пырас ĕçе вăйлăлатма кирлине кăтартрăмăр. Ку иккĕмĕш утăм пулђĕ; первейхипе вăл пĕр уйăрăлмасăр çыхăнса тăраŧ. Советсене тĕреклетес хыççăн епĕр хамăр умра йалти политтĕк тĕлĕшĕнђен пролеттариат (пуринђен малтан унăн парттийĕ) йала йертсе пымалла сатађсене илтĕмĕр.

## Парттин йалти çĕнĕ сатађђисемпе ђухăнсене орканисаŧсилесси.

Халĕ Тĕп Комиттета çирĕплетме панă ресољутсисенђе çĕнĕ ĕçсем хутшăнаççĕ, партти умĕнђе тăракан çĕнĕ сатађсем лараççĕ. Çав çĕнĕ йĕркесене кĕскен акă мĕнле палăртса пама пулаŧ: вăл—хресђенсен массине пролеттариат йертсе пырас ĕçпе парттин йертсе пырас ĕçне çирĕплетес ĕçпе советсене ђĕрĕ сывлăш кӳртес ĕçе мĕнле çулсемпе, мĕнле майсемпе туса пымаллине кăтартни. Çак шухăша тĕплĕрех палăртса парас тесе епĕ пĕр пример кăтартăп, унтан хаљхи сатађђă пит паллă тĕрĕс курăнса тăраŧ.

Пĕрик ерне пĕркун манăн пирĕн Курск кĕпĕрнинђи Партти Комиттеђĕн çекреттарĕпе калаçмалла

пулђĕ. Вара вăл мана çак иртнĕ çул хушшинђе сахăр савăђĕсен аллинђи совет хуçайствисемпе хресђенсем хушшинђе хирĕçӳсем пуçланни çинђен каласа кăтартрĕ. Вăл темиçе хут та савăтсемпе çывăх районсенђи йалсен хресђенĕсем пĕр каварлă пулса, (çийелтен пăхсан пĕр каварлă пулнă пек курăнат) сахăр савăтсен çĕрĕсене хресђенсен аллине пама ыйтни курăнат, терĕ. Çав ыйтнисенђе пуринђен ытла пур йалăн, пур йалти хресђенсен йађĕпе ыйгни курăнђĕ, çапла вара вăл ыйтусемшĕн пур йалти хресђен халăхĕ тăнă пек пулђĕ, тет. Анђах пирĕн йулташсем вăл ĕç патне çывăхарах пырса перĕнсен, вăл сахăр савăтсенђи çĕрсене илесшĕн тимлекенни Курск кĕпĕрнинђи кулаксен ĕçĕ пулни курăнђĕ, тет. Вăл ĕçре кулаксем пĕлсе, пĕрлешсе, хăйсем тавра пур йала пĕрлештерсе тăнă. Сахăр савăђĕсенђен мĕнле те пулин çĕрсене туртса илес тесе, вĕсем никамран ыйтмасăрах ăçта та пулин сахăр савăђĕн çĕрне сухаланă, сухалаканнисем пуйантарах пурăнакан кил хуçисем пулнă. Çĕрне сухаласан вĕсем ђухăнсене каланă: „Халĕ Курска кайса вăл çĕре пире йал ваљђи пађђăр, тесе ыйтмалла, унта сирĕн те пай пур“, тенĕ. Тата вĕсем ђухăнсене „вăл çĕре епĕр хатĕрлерĕмĕр, тенĕ, сухаларăмăр сирĕн пайа та“, тенĕ. „Çуркунне акас ђухне—есĕр, ђухăнсем, ăна хатĕрленине илеттĕр“, тенĕ. Çапла вара пĕлсе, орканисатсиленсе, хăйсем тавра пур йала пĕрлештерсе, йалти пуйансем хăйсен шухăшĕсене ĕçе кĕртсе пынă, вĕсене çĕр кирлĕ

пулнă, мĕншĕн тесен вĕсен укçатенкĕ нумай пирки вĕсене хăйсен çĕрĕсем çитмен. Çапла вара вĕсем хăйсен инттересĕшĕн вăтам хресђенсемпе ђухăнсене те хăйсем майлă тунă. Ђухăнсем, хăшђухне хăйсен халђхи çĕрĕсемпе те усă курма пултарайманнисем, хăш вырăнсенђе кулаксене хирĕç тăма пуçласа, вĕсемпе килĕштермен, анђах апла пулсан та вĕсем кайран кайран çапах кулаксемпе пĕр майлă пулса кайнă. Вăтам хресђенсем çинђен калаçмалли те çук. Унпек пулнă ĕçсенђе вара йал пĕрпек шухăшланă пек туйăннă, анђах ĕçĕ ђăннипех кулаксем йал халăхне хăйсем хыççăн йертсе пынипе пулнă. Кунтан, йулташсем, пирĕн пысăк йăнăшсем ăçтан пулнине, пирĕн йăвăрлăхсем ăçта иккенне курма пулать, хамăр политтĕка ĕçе мĕнле кĕртмеллине курма пулать. Çак йăнăшсене, çак йăвăрлăхсене епĕр советсене çирĕплетес тĕлĕшпе первей утса пуссанах тĕлпултăмăр. Çак вăхăтра пирĕн йала кулаксем йертсе ан пыђђăр тенĕ ĕçе тума пĕлмелле, хăйсем хыççăн ђухăнсене кăна мар, вăтам хресђенсене те ан йертсе пыђђăр, тесе тăрăшмалла. Пирĕн сатађ—ђухăнсене кулаксен аллинђен çăласси, тата ђи йăвăртарах сатађ—вăл кулаксен аллинђен йалти вăтам хресђенсене çăласси. Çакăнпа пĕрлех пирĕн Советсене çирĕплетес тĕлĕшпе первейхи утăмсенђех пирĕн партти орканисатсийĕсем пысăк йăнăшсем тунине астумалла. Халĕ епĕр хăш вырăнсенђе партти орканисатсисем советсене вăйлăлатас политтĕкран кайа йулса пынине сисетпĕр. Хăш

вырăнсенђе вĕсем çав сатађсене ĕçе пĕртте кĕртсе пырайман, вĕсен поçитсине советсенђе те, копператтивсенђе те, тата ытти орканисатсисенђе те туртса илкеленĕ. Вĕсем ђасђасах хăйсен тĕп сатађисене тĕрĕс пĕлсе çитеймен, ĕçлемелли çĕнĕ меттăтсене, унпа пĕрле совет влаçне çывăх тăракан çынсене тĕрĕс пĕрлештерме пултарайман, анђах çав вăхăтрах политтĕк тĕлĕшĕнђен йалта пурăнакан пур халăх та, вĕсем хушшинђе йалти пуçлăхсем те, ўснĕ, малашне те ўссе пыраççĕ. Пирĕн çав актив ўссе çитĕнсе пынине шута илсе, хамăр ĕçе кулаксен ĕмĕђĕсене хирĕç вăйлăлатмалла. Çакăнтан вара çак çĕнни пуçланса кайать, епĕр ăна парттин йалти политтĕк тĕлĕшĕнђен йăшăнмалли решшенисене кĕртмелле. Вăл çĕнĕ йĕрке—хаљхи вăхăтра, хаљхи условире, хаљхи вăйпа, хаљхи политтĕкри вырăнаçура, партти тавра пур лайăхрах ђухăнсене пĕрлештересси, йалти ђухăн пурăнакансене, унпа пĕрле мĕнле те пулин кулаксен аллинђен вăтам пурăнакансене çавăрса илсе, вĕсене хамăр хыççăн, партти хыççăн пролеттариатпа йалти ђухăнсем хыççăн йертсе пырасси. Вăл ĕçре пирĕн йалта ĕçлесси питĕ пысăк сатађђă.

Çак ресољутсин первейхи пайĕнђе халĕ пурнăçра мĕн тумалли сатађсене кăтартнă. Унта халĕ парттин хăйĕн умĕнђе тăракан сатађђи çинђен, йалти ђухăнсене орканисатсилес сатађ çинђен каланă. Вăл тĕлĕшпе партти орканисатсисен йалсенђе уйрăм ђухăнсен пухăвĕсене пухмалла, йе

ђухӑнсен уйрӑм крупписене орканисатсилеме тытӑнмалла, ђухӑнсене партти тавра пӗрлештерме уйрӑм формӑсем тупмалла, вара вӑл çулпа, вӑтам пурнакансемпе пӗрле ӗçлесе, партти тавра хресђенсен пур тӗп массине пӗрлештерессине ӗçе кӗртмелле. Вӑл круппӑсене мӗнле тумалла? Ман шухӑшпа халӗ Тӗп Комиттетӑн вӑл ыйту тӗлӗшпе хӑйӗн ытлашши кӑтартусем тумалла мар, пӑртакçӑ пирӗн пӗрлешӳллӗ кӑтарту парса йалти пурнӑçра мӗнле формӑсем пулнине кӗтмелле. Вӑл ӗçре нийепле те васкамалла марри çинђен халех калас пулать. Кашни йалтах ђухӑнсен орканисатсине, йе ђухӑнсен крупписене тумалла, йе халех вӗсене тумалла тесе каламашкирле мар. Тепӗр йенђен вӑл круппӑсене мӗнле майпа орканисатсилесси тӗрлӗрен тӗслӗ йал йепле сийленсе пынинђен килет, тата йалта партти орканисатси çирӗппинђен, тата епӗр вӑл круппӑсене хамӑр йенне çавӑрма пӗлнинђен килет. Мӗнле пулсан та, тӗп правӗлӑсем çаксем пулмалла: вӑл круппӑсем партти тавра пӗрлешсе пымалла, пирӗн парттин орканисатсисем тавра орканисатсиленмелле, тата вӗсене епӗр йертсе пымалла. Хамӑр сатађсене тума пултарнӑ çӗрте— пирӗн вӑл ӗçе тытӑнмалла. Çавӑнпек круппӑсем тунӑ вырӑнсенђе пирӗн сатађ—вӑл çав круппӑсем нийепле те йалта вӑтам пурӑнакансене хирӗç ан тӑђђӑр тенӗ йӗркене ӗçе кӗртсе пырасси. Пур шухӑшсем те пирӗн вӑтам хресђенсемпе çыхӑнса пымалла, хамӑр ӗçре пирӗн вӑтам хресђенсемпе

пĕрлешсе пыма тăрăшмалла. Ман шухăшпа, епĕр суйлав кампаџисене иртернĕ ђух ђухăнсен пухăвĕсене хăшпĕр вăтам хресђенсене те ђĕнсен ним усал та пулас çук туйăнаť, йе вăхăтăн-вăхăтăн советсенђе, копператтивсенђе, ĕçтăвкомсенђе – епĕр пулăшнипе суйланă ђухăнсем пулсан—ђухăнсем фракси йевĕрлĕ пухусем туса, тĕрлĕ пурнăçа кĕртмелли ĕçсене тĕплĕрех сӳтсе йавсан,—ним усал та пулас çук.

Çавăн пек ђухăнсен крупписем, йе фраксисем советсенђе, копператтивсенђе, тата ытти çĕрте те вĕсемпе пĕрле, вĕсен пуçĕнђе комуниссем пулса пырсан, вĕсене тĕрĕс пĕрлештерсе комуниссем йертсе пырсан тин усăллă. Ђăнах та, çавăн пек ђухăнсен крупписемпе фраксисем парттиҥе ĕçлеме лайăх уртăм пулĕç, вĕсене вĕрентес, вĕсенђен çĕнĕ ĕçлекенсем хатĕрлес ĕç, вĕсем урлă ытларах, лайăхрах, парттире тăман хресђенсене çирĕпрех çыхăнтарса, йертсе пырса, йала орканисатсилесе пыма пулăшĕç. Малалла Парттин Тĕп Комиттеђĕ вăл круппăсене пĕрлештерес тĕлĕшпе ĕçленĕ, çинђен маттериалсем пухĕ, лайăх орканисатсилесе тунă формăсене уйăрса, вĕсемпе ытти районсенђе, йе ытти вырăнсенђе ĕçленĕ формăсене танаштарса, ĕçри сăнавсемпе усă курма пултарĕ. Ку ыйтăва çапла тумалла тесен халĕ çитет, анђах хыттăн калас пулаť—вăл ђухăнсен крупписем йалсенђе вăтам хресђене хирĕç ан тăђђăр, тата советсемпе копператтивсене хирĕç тăракан ан пулђђăр. Тата малашнехи суйлав камп-

паңисенђе те, советсемпе копператтивсен малашнехи ӗҫӗсенђе те ку ӗҫе йертсе пырас тӗлӗшпе парттин ытларах ӗҫлемеллине кӑтартмалла.

Пирӗн советсен суйлав кампаңине иртернӗ вӑхӑтра пулнӑ инкексинкексене шута илсе, хаљ те пур советсене суйлас кампаңине иртернӗ ђухне пирӗн лайӑхрах орканисатсиленмелле, ђухӑнсене хамӑр партти тавра ытларах тимлесе пӗрлештермелле, тата копператтивсене, советсене, хресђенсен пӗрпӗрне пулӑшакан ушкӑнӗсене суйланӑ ҫӗрте ђухӑнсемпе вӑтам хресђенсене пӗрлештерсе пымалла. Ђухӑн пурӑнакансен инттересӗсене пӗрлешсе сыхлама тӑрӑшмалла, тата вӑл тӗлӗшпе тӗрлӗрен ыйтусене копператтивсем, советсем, хресђенсен пӗрпӗрне пулӑшакан ушкӑнӗсем тата ыттисем урлӑ пурнӑҫа кӗртме хатӗр пулмалла. Пирӗн партти ђухӑнсем ҫине ытларах уртӑнса, вӗсемпе пӗрле хӑй тавра вӑтам хресђенсене пӗрлештерсе,—пуйансене (кулаксене) пӗђђен тӑратса хӑвармалла. Акӑ ӗнтӗ советсене тӗреклетес майӗпе иртнӗ ҫулта партти йалта ӗҫлес тӗлӗшпе кӑтартнӑ сатађ. Халӗ ӗнтӗ ку ӗҫе вырӑна кӗртсе, малалла йарса пусмалла, вӑл пусӑм —пирӗн ӗҫсене, пирӗн йалти политтӗка ҫирӗплетесси пулмалла. Ђӑнах та, халӗ пирӗн вырӑнти орканисатсисем хусканђӗҫ, ђухӑнсене пӗрлештерес ыйту ҫинђен ҫӗнӗ условисем тӑрӑх ку таранхинђен ытларах шухӑшлама тытӑнђӗҫ. Сӑмахран, ҫак хушӑра Украйнӑра комнесамсене*) пӑсма йусас ыйтӑва

*) Комнесам—Украйнӑри ђухан хресђенсен комиттеђӗсем.

питӗ тимлесе сӳтсе йавни ҫинђен епӗр пӗлетпӗр. Вăл ыйту Украйнăшăн парттин мӗн пур политтӗкӗнђе те питӗ пысăк вырăн йышăнса тăрат. Украйнăри К. (п.) Парттийӗн тӗп комиттеђӗ йышăннă решшенисем тăрăх—комнесамсене ирӗклӗ, опђӗствăллă орканисатсисем тăвасси—вăл решшенисем ман шутпа пурте тӗрӗс, вӗсем ҫӗнӗлетнӗ комнесамсен малалли шухăшӗсене тӗрӗс ҫулпа хуҫайствăна вăйлăлатас, ђухăнсен хуҫайствисене ҫирӗплетес ҫулпа йарса пыраҫҫӗ, ку ӗҫре ђухăнсемпе вăтам хресђенсене пӗрлештерсе (копператси, пӗрлешӳллӗ хуҫайствăсем т. ыт.) пыраҫҫӗ. Украйнăри ҫӗнӗрен пăсса орканисатсиленӗ комнесамсем — малашне Парттин йалти политтӗкне ӗҫе кӗртме пулăшмалла; вара ђăнах та нађар пурăнакан халăхăн пурнăҫне ҫирӗплетес тӗлӗшпе партти унпек орканисатсисем ҫине уртăнма, вӗсем пулăшнипе ђухăнсене тата револђутсишӗн малта пыракан хресђен халăхне пӗрлештерме пултарӗ.

## Парттин тӗп линипе вăтам хресђен ыйтăвӗ.

Паллах ӗнтӗ, епӗр унпек сатађ лартатпăр пулсан, вăл пирӗн йалти тӗп линипе питӗ ҫирӗп ҫыхăнса тăмалла. Урăхла каласан, вăл пролеттариатăн хресђенпе сойус тăвас политтӗкӗпе ҫыхăнса тăмалла—ку пӗрре, тата пролеттариат хресђене ҫителӗклӗ йертсе, ҫул кăтартса пырас ӗҫпе ҫыхăнса тăмалла—ку иккӗмӗшӗ.

Револђутси вăхăтӗнђе епӗр йалти политтӗк тӗлӗшпе пӗр утăм хыҫҫăн теприне пусса пытăмăр.

Епĕр Октăпĕр Революутси вăхăтĕнђе пролеттариатпа ђухăн хресђене пĕрлештерес лосăнкпа ĕçлесе пынине есĕр, йулташсем, лайăх пĕлеттĕр. Ку лосăнк пуршуаçирен ирĕке туртса илес тĕлĕшре, тата харампырсен пурлăхне туртса илес тĕлĕшре пролеттариатпа ђухăнсене пĕрлештерсе тăђĕ. Кунсăр пуçне тата акă мĕн асгумалла: епĕр йалсенђе октăпĕр кунĕсенђенех пуçласа, пролеттариат тиктаттурине çирĕплетсе пынă майĕпех, пур хресђенсемпе пĕрле пуршуаллă-темократтиллĕ революутси „туса пĕтермен" ĕçсене туса пĕтерсе пытăмăр. 1918 çулта çăва çитиђђенех епĕр вăл политтĕк йалта пур хресђенсемпе, пур халăхпа пĕрле туса пытăмăр. Епĕр 1918 çулта çулла пуçласа, пĕр хĕрхенмесĕр тимлесе, хастарланса йалти пуршуаçипе, йалти кулаксемпе кĕрешме тытăннине есĕр астăваттăр.

Кулаксемпе кĕрешес политтĕка епĕр йалти ђухăнсемпе пĕрле кăна, ним хĕрхенмесĕр, хăш çĕрте хĕçпăшал тытса ђухăнсем кулаксемпе кĕрешнĕрен анђах вăл ĕçе пурăнăçа кĕртме пултарнă. Пирĕн партти вăл политтĕка ĕçе кӳртме 1918 çулта çулла тыгăнђĕ. Анђах ĕнтĕ парттин 8-мĕш сйесĕнђе 1919 çул пуçланнă ђухнех партти йал çинђен çĕнĕ ыйту лартмаглине пит паллă кăтартрĕ—вăтам хресђенсем çинђен, пирĕн вăл вăтам хресђенсем çине мĕнле пăхмалли çинђен. Унђухне вăл ыйтăва мĕнле лартнă? Епĕ сире В. Илйиђăн парттин 8-мĕш сйесĕ уçăлнă ђухне каланă сăмахĕн ђи паллăрах вырăнĕ-

сене каласа парăп, ман шутпа вĕсене хађхи вăхăтра астума кирлĕ. В. И. Ленин вăтам хресђенсен ыйтăвĕ çинђен çапла калађђĕ: „Пирĕн пуршуаçи çине пăхас сатађђа – „кĕрешесси“, „пĕтерессн“, тенĕ сăмахсем тĕрĕс кăтартаççĕ пулсан, тата йалти пролеттариатпа çур пролеттариат çине пăхас çĕрте пирĕн сатађђа „тĕрек“ сăмах тĕрĕс кăтартаттăк пулсан—кунта (вăтам хресђен çинђен калаçнă çĕрте. В. М.) пирĕн сатађ нумай йăвăртарах пулнинђен тĕлĕнмелли те çук. Ку ыйтура авалхи сотсиалисăмăн ђи лайăх претставиттĕлĕсем, револютси пуласси ĕненсе, уншăн теори тĕлĕшĕнђен ĕçленĕ вăхăтра—*хресђенсене револютси вăхăтĕнђе никам майлă та мар тумалла* тенĕ, урăхла каласан, вăтам хресђене револютси ĕçне пулăшакан тумасан та, мĕнле те пулин пирĕн ĕçе кансĕрлемелле мар тумалла, тенĕ. Сатађђа çапла теорилле, ĕçрен уйрăм лартни пирĕншĕн паллă. *Антђах пире вăл çителĕклĕ мар.* Сотсиалисăм тăвас ĕçре епĕр ђылай мала кайрăмăр, çавăнпа та пире халĕ татăклă, тĕплĕ кăтартусем кирлĕ, *пире вăтам хресђенпе тађă сойус тума пулăшакан кăтартусем,* правĕлăсем кирлĕ. (Курççивĕ пур çĕрте те манăн. В. М.). В. И. Ленин унђухне парттипе пролеттариатăн вăтам хресђен çине мĕнле пăхасси çинђен, тата хресђен хушшинђи ытти сийсем çине пăхасси çинђен акă мĕнле вĕрентнĕ; ку сăмахсене вăл парттин VIII сиесĕнђе каланă.

Вăл вăхăтра кăтартса вĕрентни хађхи вăхăтра та вырăнлăши? Ман шутпа ун çинђен нимĕн те

иккĕленсе тăмалли çук. 1919 çултах, первейхи пирĕн вăрçăсăр хуçайствăна хăпартас шанђăк курăна пуçласанах В. И. Ленин вăтам хресђенсем çине пăхас çĕрте хресђенсем никам майлă та ан пулђђăр тени йурамасť тенĕ пулсан,—халђхи вăхăтра вăл ĕç тата пысăк вырăн йăшăнаť. Халĕ ĕнтĕ пирĕн политтĕкĕн никĕсĕ—пролеттариат вăтам хресђен çине пăхас политтĕкĕн никĕсĕ—вăл унпа çирĕп сойус тăвасси, темелле. В. И. Ленинăн „Копператси" çинђен çырнă статйи хыççăн ку ыйтăва çапла тăратни—халђхи пролеттариатăн револђутси вăхăтĕнђи ђăн тĕрĕс, пĕртенпĕр тĕрĕс политтĕк тесе калама пулаť. Ђăн ĕнтĕ, „копператси" çинђен çырнă статйа—пирĕн халђхи вăрçăсăр, орканисатсиллĕ, кулђттурăллă ĕçе куçнă вăхăтри, сотсиалисăм ĕçне туса пымашкăн пур ĕçхалăхне копператсине кĕртмелле вăхăтри парттин политтĕкне кăтартса пыракан статйа—пирĕн вăтам хресђен çине пăхнă политтĕкĕн тĕп линине кăтартса параť. Хамăрăн практĕккăри ĕçсене—патшалăх, партти, тата ытти ĕçе теçакна кура туса пырсан, ман шутпа, пирĕн партти çуркунне йăшăннă решшенисем тĕрĕсси, хресђенсемшĕн совет влаçĕ усăллă решшенисем йăшăнни питĕ аван курăнаť (Тĕп Комиттетăн йанвар уйăхĕнђе пулнă пленăмĕнђе, парттин 14-мĕш конферентсинђе йăшăннă решшенисем).

Йалта тавар çавăрăнăçĕ çăмăлланса пыни, „вăрçăллă комунисăмăн" йĕрки пĕтсе пыни, тата хресђен тĕп массин пурнăçне çăмăллатакан йĕркесем

(йалхуçайстви налукне ытларах ђакарни, вăхăтра тырăпулăпа йалхуçайстви таварĕн хакне йĕркелетни, хресђенсене çĕнĕрен вăрманпа çĕр касса пани, тата унсăр пуçне выçлăх пулнă районсенђи, çĕр сахал çĕрти, Вăтам-Аçири çĕрмамăк тăвакан районри хресђенсен пурнăçне çăмăллатас тĕлĕшпе уйрăм йăшăннă йĕркесем—вĕсем пурте пролеттариатпа хресђенĕн тĕп массине çирĕп çыхăнтарса тăма кирлĕ. Пролеттариатпа ђухăн хресђен вăтам хресђенпе килĕштерсе пурăнас политтĕк халђхи вăхăтра ђăн кирлĕ политтĕк, кунтан пролеттари револђутсийĕ валђђи акă мĕн курăнса тăрат: халђхи вăхăтра парттипе совет влаçĕ хресђен массин пурнăçне йусама пултарнă таран, хресђенĕн тĕп массине пулăшу кăтартас тĕлĕшпе мĕн тума пултарнă таран—парттипе совет влаçĕн вĕсене пĕр ђарăнмасăр туса ĕçе кĕртсе пымалла. Анђах ку ĕçре пуринђен ытла йалти ђухăнсен нуштине, вĕсен инттересĕсене ытларах астумалла. Ку—пирĕн халђхи вăхăтри пур ĕçсемшĕн те кирлĕ йапала. Епĕ тата маркçисăм никĕсне хуракансенђен пĕри Ф. Енкĕлс вак хресђенсем çине пирĕн мĕнле пăхмалли çинђен каланине кăтартас тетĕп. Вăл каланă: „Епĕр пикенсе вак хресђен йенђе тăратпăр. Епĕр ăна çăмăлтарах пурăнмалла пултăр тесе—мĕн вăй çитнĕ таран мĕн тума май килнине тăватпăр", тенĕ. Малалла вăл каланă: Епĕр пролеттарисем ан пулђђăр тенĕ хресђенсен шуђĕ нумайланса пынăçемĕн вĕсене хресђен ђухнех хамăр йеннелле çавăрсан—вара

спђёстваҏи улшӑнусем хӑвӑртрах, ҫӑмӑлтарах пулӗҫ“, тенӗ. Хӑшхӑш йулташсем пирӗн „йал—вӑл пролеттари патшалӑхӗн колонийӗ“, тени йӑнӑш, сийенлӗ теори иккенне ҫак сӑмахсем татах тепӗр хут кӑтартаҫҫӗ. Пролеттари револђутси тӗп интересӗ тӗлӗшӗнђен вӑл теори тӗрӗс мар, йӑшӑнмалла мар. Парттин вӑтам хресђен ҫине пӑхмалли йалти политтӗкӗ—вӑл вӑтам хресђен массипе ҫирӗп никӗслӗ сойус тӑвасси. Ӑна тумашкӑн хресђен массин пурнӑҫне ҫӑмӑллатса пыракан йӗркесем, пролеттари револђутси ӳссе пырас ӗҫӗн никӗсне ӳкермесӗр йышӑнма пултаракан йӗркесем кирлӗ.

Пролеттари патшалӑхӗн вак хресђенпе вӑтам хресђенӗн пурнӑҫне ҫӑмӑллатма мӗн тума пултарнӑ таран, револђутси ӳссе пынӑ майӗпе пулӑшмалла. Кунпа пӗрлех хресђен хуҫайствине копператсилес йӗркесене тума пулӑшмалла, йалхуҫайстви техниккине малалла йамалли йӗркесем тупса ӗҫе кӗртмелле, йалхуҫайствине электрификатсилес ӗҫе пулӑшса, унпа пӗрлех вӑраххӑн ирӗклӗ пысӑк коллективлӑ хуҫайствӑсем тума пулӑшса, ҫӑмӑллатса пымалла. Пролеттари влаҫне хресђенсем шанса тӑрассине ҫирӗплетес тӗлӗшӗпе, тата хресђен массин пурнӑҫне халех, май килнӗ таран ҫӑмӑллатас тӗлӗшпе, тата кусемпе пӗрлех хресђенсене копператси урлӑ коллективлӑ хуҫайствӑна куҫма пулӑшас тӗлӗшпе пирӗн мӗн тума пултарнине пурне те тума тӑрӑшмалла. Вӑтам пурӑнаканпа килӗшсе ӗҫлес ҫӗрте, йалти ђухӑнсем ҫине уртӑнас ӗҫе ҫирӗплетес

çĕрте пирĕн çавăнпек политтĕк пулмалла. Кун çинђен нумайах калаçкаланă. Ун çинђен Парттин йулашки конферентси постановленисенђе те çитеlĕклĕ каланă.

## Тĕрĕс политтĕкран икĕ майлă пăрăнни.

Анђах вăл политтĕка ĕçе кĕртнĕ ђух епĕр питĕ пысăк йăвăрлăхсене тĕлпулатпăр. Вăл тĕп йăвăрлăхсене епĕ халђхи вăхăтра питĕ паллă примерпа кăтартăп. Тырпул хакне тăвас политтĕк йал пурнăçĕшĕн ђи пысăк ĕçсенђен пĕри. Тырпул хакĕ тĕлĕшĕнђен халђхи вăхăтра парттин мĕнле политтĕк тумалла. Вăл ыйту çинђен ытларах шутласан, вăл пире мĕнле икĕ йăвăрлăха, хăрушăлăха йалта хамăр политтĕке тунă çĕрте шутра тытса тăмалли çинђен асăрхама май кўрет. Халђхи вăхăтра пролеттари револђутси 8 çул тултарнă хыççăн, пайтах çĕр улпуђĕсемпе пуйансен çĕрĕсем вактĕвекпе вăтам пурăнакан хресђенсен аллине куçсан, пирĕн йал вăтам хресђенлĕ пулса кайнине, йалти хуçайствăсем хушшинђе вăтам хресђенсем тĕп вырăн йышăнса тăнине епĕр пĕлетпĕр. Йал хушшинђе пуйансемпе ђухăнсем уйăрлса тăни малашнехи çулсенђе те хăйнех ытларах палăртĕ, ђухăнсене нумайлатса, йалти пуйансем хушшинђен йал пуршуаçийĕ уйрăлса пырĕ. Халђхи вăхăтра пасар таврашне ђи нумай тырпул сутса тăракансем вăтам хресђенсем. Куна ăнланма йăвăрах та мар. Çавăнпа та пирĕн тырпул хакĕн политтĕкĕ пролеттари

патшалăхне сыхласа тăмалла пулмалла, вăл политтĕкĕн пролеттариат тиктаттурĕн никĕсне, сотсиалисăмăн никĕсне çирĕплетсе тăмалла. Анђах унпа пĕрле вăл политтĕк вăтам хресђенпе çирĕп сойус тăвас ĕçе пăсмалла тумалла мар, вăл йалти хресђенĕн инттересне те тĕрлĕрен çăмăллăхсем тумалла. Çавăнпа та епĕр тырпул хакне йӳнетесси çинђен калаçнă ђухне те, тырпул хакĕ ытла ӳкесси çинђен каланă çĕрте те, унта та, кунта та пирĕн тĕп вăтам хресђен массин инттересне пит астуса тăмалла, вăл инттерессем пролеттари патшалăхĕпе килĕшӳллĕ пулмалла. Тырпул хакĕ политтĕк тĕлĕшĕнђен епĕр пролеттари патшалăхĕшĕн йăвăр политтĕке ĕçе кĕртме пултараймастпăр. Ку—пирĕн тĕп лини, епĕр ун тăрăх ĕçлесе пынă, малашне те ун тăрăх ĕçлеме тивĕçлĕ. Анђах кунпа пĕрлех пирĕн йалхуçайстви таварĕсен хакĕ ӳкесрен, вĕсем хресђен хуçайствине нађарлатасран, вара унтан йалти вăтам хресђенсен хуçайствине ӳсме ђарăнасран сыхламалли йĕркесем тупмалла. Çавăнпа та пирĕн хăш вăхăтра, тырпул нумайрах хатĕрлесе, йе ăна ытларах йут патшалăха йарса унăн хакĕсем ытла ӳкнипе кĕрешмелле. Унпа пĕрлех, калăпăр хаљхи вăхăтра, тырпул хакне йӳнетмелле, пролеттари патшалăхне те, пирĕн ĕçлекенсемпе йалти ђухăнсем валли те ытла йăвăр ан пултăр тесе тăрăшмалла, мĕншĕн тесен вĕсем тырпул илекенсем. Акă ĕнтĕ пролеттари патшалăхĕн инттересне астунă ђух — вăл инттерессем пĕрлешни,

йалти ђухӑнсемпе ӗҫлекенсен тӗп инттересне астумалли пирӗн парттин политтӗкӗ.

Ку политтӗка икӗ майлӑ пӑсса, унтан икӗ майлӑ пӑрӑнса кайма пултарнине пирӗн йаланах шутра тытмалла, вӗсене хирӗҫ мӗн вӑй ҫитлӗ таран кӗрешмелле. Первейхи йӑнӑшас хӑрушӑллӑх, первейхи тӗрӗс политтӗкран пӑрӑнас хӑрушӑллӑх — вӑл, йалти тавар ҫавӑрӑнӑҫӗ ӳснӗ ҫӗрти, йалти „вӑрҫӑллӑ комунисӑм“ йӗркисене пӗтернӗ вӑхӑтри хӑрушӑллӑха шута илменни; ку политтӗк вактӗвек тавар тӑвакана ҫӑмӑллӑх парса, йалти кӑпитталисӑма вӑйлӑлантарса пынине, кулаксене ђӗрӗ сывлӑш кӳртсе пынине, тата ку политтӗк хӑй тӗллӗн йалти классем уйрӑлса пырас ӗҫпе пролеттариата хирӗҫ вӑйсем ӳссе ђарса тӑманнине асра тытмалла. Ун ҫинђен Ленинах каласа хӑварнӑ. Ҫавӑнпа та пӗрвейхи хӑрушӑллӑх, пирӗн астуса тӑмалли хӑрушӑллӑх, вӑл економӗккӑн ҫӗнӗ политтӗкӗн усӑллӑ мар йенӗсене тивӗҫлӗ шута хуманни, вак хресђен хуҫайствисене тавар ҫавӑрӑнӑҫӗпе ҫыхӑнтарас политтӗкӗн йӑнӑш йӗркисене тивӗҫлӗ хак хума пӗлменни, мӗншӗн тесен вӑл политтӗк пирки кӑпитталисӑмла елементсем ӳссе пыраҫҫӗ йалти ђухӑнсем нумайланса пыраҫҫӗ. Ҫавӑнпа та пирӗн йалти ђухӑнсен пурнӑҫне аванлатса кӑтартнипе, тата йалти кулаксен ырӑмар ӗҫне тивӗҫлӗ хак парайманнипе питӗ кӗрешмелле.

Кунта астутарамха тата: апрел уйӑхӗнђе пулнӑ Тӗп Комиттет пленӑмӗнђе, тата парттин конфе-

рентсинђе копператси çинђен токлат тунă çĕрте йалти кулаксем ÿснĕ хăрушăллăха шуга хуманни, тата йалти ђухăнсен инттересĕсене ытларах асра тытманни питĕ йурăхсăр йапала, тенĕђђĕ.

Анђах хаљ ĕнтĕ çакăн пек пример кÿреп, вăл пирĕн йулашки вăхăтра йĕркесĕр сăмахсем тухса каланисем пулнине кăтартаť, вĕсемпе пирĕн парттин тимлесе кĕрешмелле. Акă йулташ Покушшевски „Пољшевикăн“ 9--10-мĕш номĕрĕсенђе çырнă статťйи. Унта кулаксем çинђен çапла каланă: „Кулак—вăл хăратмалли сăмах, вăл кив тĕнђен мĕлки. Мĕнле пулсан та вăл халăх сийĕ мар, круппă та, пĕђĕк ушкăн та мар! Вăл—вилсе пĕтсе пыракан, унта-кунта йулнă йапала!“ Малалла та çавăн йеверлех каланă: Йалти кулаксен ĕçне тĕрлĕ статťйасенђе пысăклатса кăтартни вăл ку сăмах питĕ çăмăл, ђасђасах калама вĕреннĕрен анђах пулаť.“

„Пољшевикăн“ ретаксийĕ йул. Покушшевски статťйипе килĕшменни çинђен хыттăнах കаларĕ. Вăл ђăнах та тĕрĕс. Кулака çавăн пек анђах шута хуни, йе хаљхи йалта кулаксене тивĕçлипе астуса шута илменни—вăл йалти хаљхи пурнăçа пăтратса йама пултараť. Вăл партти кулаксем çинђен каланине хирĕç пыраť.—Тата тепĕр инкек те пур, пĕђĕк инкек çеç мар, пирĕн питĕ астуса тăма кирлĕ инкек. Вăл инкек—еккономĕккăн çĕнĕ политтĕкне, тата йалта вăтам пурăнакан хресђен питĕ пысăк вырăн йăшăнса тăнине тивĕçлипе хака хуманни; В. И. Ленин каланă пек, ЕÇП вăл

харпăрхăй пурлăхĕшĕн тăрăшакан хресђене çăмăллăх туни. Вăл хăрушăлăх пирĕн вăтам хресђенпе çирĕп сойус тумаллине хака хуманни, хаљхи вăхăтра пролеттари патшалăхĕн инттересĕсене сыхлама вăтам хресђенпе сойус туни пĕртенпĕр тĕрĕс политтĕк пулнине тивĕçлипе хак хуманни.

Йулташсем, есĕр пурте çак ыйту тĕлĕшпе йулташ Ларин, парттин йалти политтĕккĕпе килĕшменнине, вăл политтĕке аркатакан пысăк йăнăшсем тунине, пĕлеттĕр. Вĕсем çинђен ђарăнса тăмастăп. Вăл йăнăшсене пурте пĕлсе тăраççĕ. Вĕсем çинђен парттин йулашки конферентсинђе те пĕрре кăна мар каланă.

Кун пиркийех сире тата тепĕр пример каласа парам.

Харйккăв „Комунисĕнђе“ çак çулта ийуљ уйăхĕнђе çырнă статйасенђен пĕрне илер. Статйине йулташ П. Солотуп çырнă, кунта ларакансенђен ăна нумайĕшĕ пĕлеççĕ. Вăл статйара йулташ Солотуп комнесамсене çаплипех хăвармалла, тесе çыраť, Украинăри комнесамсене пăсса йусас плана хирĕç çыраť. Мĕншĕнха вăл комнесамсене первайхи пекех хăвармалла тет?

Акă унăн тĕп шухăшĕ. Вăл калаť; „Ђухăн хресђенсене, вăтам хресђенсемпе çыхăнса тăракан круппă тесе шута хуни тĕрĕс мар. Ђухăн хресђенсемпе вăтам хресђенсен инттересĕсем сайра хутра анђах пĕр пек пулма пултараççĕ. Нумай çĕрте хуçайства тĕлĕшĕнђен вăтам хресђен инттересĕсем пĕтĕм-

пех урăхла“. Малалла вăл комнесамсем мĕншĕн кирлине калаť. Унăн комнесамсене хăвармалли çинђен калакан первейхи икĕ сăлтавĕсем çинђе ђаранмасăрах, Солотуп йулташăн йулашки икĕ сăлтавне тĕллесех кăтартмалла, вĕсенђе вăл ђухăн хресђенсен комиттеђĕсене çаплипех хăвармалли çинђен акă мĕн калаť: „виççĕмĕшĕ—кашни утăмрах кулаксемпе вăтам хресђенсен инттересĕсемпе хирĕçсе пыракан ђухăнсен инттересне сыхлакан орканисатси тесе, тăваттăмĕшĕ—парттин йалти политтĕкĕ валли пĕртенпĕр политтĕк никĕсĕ, тесе“.

Акă тепĕр йеннелле пăраннине кăтартакан пример, ăна хирĕç парттин тимлесе кĕрешмелле.

Çакăн пек йăнăшнă пирки, йулташ Солотуп ђухăнпа вăтам хресђене хирехирĕç тăратаť; ђухăнсенпе вăтам хресђенсен инттересĕсем нумай çĕрте килĕшмеççĕ, тет, кашни утăмрах хирехирĕç тăраççĕ, килĕшÿллĕ пулма пултараймаççĕ, тет.

Тĕрĕсши ун пек шутлани? Çук, пĕртте тĕрĕс мар, пирĕн партти ун пек шухăша йышăнма пултараймасť. Йулташ Солотупăн, тата унăн анђах та мар, вăтам хресђен пролеттари револђутсийĕн халђхи вăхăтĕнђе мĕнле вырăн йышăнса тăнине ăнланайманни паларса тăраť. Влатимĕр Илђииђ пролеттариат инттересĕпе вăтам хресђенĕн инттересĕ пĕрпĕрне хирĕç мар тенĕ, пролеттари тиктаттурĕ вăхăтĕнђе вĕсем пĕрпĕринпе килĕшсе калаçмалла, вĕсем пĕрпĕринпе хирĕçни „Совет Респуплĕкне пĕтерме пултараť“, тенĕ. Апла Влатимĕр Илђииђ

епӗр вӑтам хресҍенпе килӗшсе пурӑнма пултаратпӑр тенӗ пулсан, пролеттари тиктаттурине ҫирӗплетес ҫулпа пынӑ ҫӗрте епӗр унпа пӗрле пурӑнма пултаратпӑр, тенӗ пулсан—совет йӗрки вӑхӑтӗнҍе вӑтам хресҍенпе ҍухӑн хресҍен килӗшмеллех; вӑл пирӗн халҍхи вӑхӑтри йалти ӗҫсен тӗп никӗсӗ пулаӗ. Вӑтам хресҍене ҍухӑна хирӗҫ тӑратнипе тимлесе кӗрешесси, вӑтам хресҍене кулак йеннелле тӗкнипе кӗрешесси, унашкал йӑнӑшсемпе мӗн вӑй ҫитнӗ таран кӗрешесси пирӗн парттин халҍхи вӑхӑтри ҍи кирлӗ ӗҫӗ.

Пирӗн йалта тавар ҫавӑрӑнӑҫӗ ӳссе пыни кирлине епӗр йышӑнатпӑр пулсан, килес вӑхӑтра йалта кӑпитталисӑм ӳссе пырасса епӗр пӗлсе тӑратпӑр пулсан,—пирӗн йалти политтӗкран ҫакӑн пек йӑнӑшса пӑрӑннисем ан пулҍҍӑр тесен,—пирӗн хамӑрӑн йалти политтӗка парттин мӗн пур политтӗкӗпе ҫирӗп ҫыхӑнтарса пымалла. Парттин йалти политтӗк парттин мӗн пур политтӗкӗнҍен уйӑрсан, парттин йалти политтӗк парттин хулари политӗкӗнҍен уйӑрсан, йал ӳссе пынине хула ӳссе пынинҍен уйӑрсан, урӑхла каласан—совет влаҫӗн екkономӗкӗн никӗсӗнҍен уйӑрсан, пролеттариат тиктаттурӗ ҫирӗпленнинҍен, пролеттариат вӑйӗ ӳснинҍен уйӑрсан пирӗн парттин ӳссе ҫирӗпленнинҍен, урӑхла каласан—хамӑр ҫӗр-шыв ӳссе пынинҍен, тата парттин пур политтӗкӗнҍен уйӑрсан,—вара епӗр йӑнӑшас хӑрушӑллӑх ҍӑн хӑрушӑллӑх пулса тӑраӗ, вара йалта тӗрӗс политтӗк тытса пыма май килес ҫук.

Пирĕн вăхăтлăха та пулин вăтам хресђенпе, вак-тĕвек тавар хуçипе килĕшсе пурăнма паракан политтĕка ĕçе кĕртме пĕлмелле, вара епĕр вĕсене майĕпе копператси урлă сотсиалисăм тăвас ĕçпе çыхăнтарса пырăпăр. Куппа пĕрле хамăр ĕçре хамăра çывăх, хамăрăн йалти ĕçĕн никĕсĕ пулса тăракан ђухăнсене çирĕплетсе тăмалла, ђухăн хресђенсем çине уртăнса, вĕсем парттине пулăшас ĕçе вăйлăлатса, кулаксен пусмăрĕпе кĕрешмелле. Анђах вăл политтĕк патшалăхăн хулари сотсиалисăмлă елеменђĕсем çине (патшалăх промышлĕннăçĕ) ĕçлекенсен класĕн политтĕкле тиктаттурĕ çине, пролеттариатăн ўссе, çирĕпленсе пыракан вăйĕсем çине, пĕтĕм парттин политтĕкĕ çине пĕтĕмĕшпе уртăнса пырсан анђах ђăн тĕрĕс политтĕк пулĕ, пролеттари патшалăхне кирлĕ таран усă кăтартĕ.

Вăл—пролеттари револђутси ўссе, вăйлăланса пырас ĕçĕн никĕсĕ пролеттариатпа хресђенсен сойусĕ анђах пулма пултарнине пĕлтерет; çав вăхăтрах вăл сойусра пролеттариат хресђен массине хăй хыççăн йĕртсе, ĕçре çул кăтартса пымалла. Пролеттари револђутсин малашнехи ĕçĕсемпе совет влаçĕн шултра промышлĕннăçĕ ўссе пынипе анђах, халăхăн кулђттурĕпе пĕрлешўллĕ ĕçĕ оркарнисатсиленсе, хамăр патшалăхра сотсиалисăм тума хатĕрленсе пынипе анђах хресђен халăхĕ умĕнђе (уйрăм каласан—йалти ђухăнсен, питĕ йăвăр условисенђе пурăнакансен умĕнђе) хуçайствăпа кулђттурă тĕлĕшĕнђен çĕкленсе сотсиалисăм ĕçне

ытларах хутшӑнма çул усӑлса пырать. Пирӗн пайанхи сатаҫсене тунӑ ҫух çавна шутласа пымалла.

Çак çул хушшинҫи ӗçсене шута илсен, тата советсене çирӗплетес ӗçӗн практӗккине курсан, йалта кулаксем хусканма пуçланине, хӑш ҫухне вӗсем, ҫухӑнсем пӗртте орканисатсиленеймен пирки вӑтам хресҫенсене те хӑйсем хыççӑн йертсе пынине астусан—пирӗн партти орканисатсисен наҫарлӑхӗсене курма пулать. Çакӑнтанах тата хаҫхи вӑхӑтра партти паллӑ туса хунӑ линийе ӗçе кӗртнӗ çӗрте ҫухӑнсене партти тавра пӗрлештерес ӗçе ытларах астумалли, ҫухӑнсене орканисатсилес ӗçе,—унпа пӗрле пролеттариатӑн вӑтам хресҫенсене йертсе пырас ӗçе—лайӑхлатасси çине тимлесерех пӑхма кирли курӑнса тӑрать.

## Ҫухӑнсене пулӑшас майсемпе парттин ӗçӗ.

Çак ӗçсемпе пӗрлех йалти ҫухӑнсене пулӑшас тӗлӗшпе тӗрлӗрен халех тума май пур ӗçсем тӗсесе ӗçе кӗртмелле. Хатӗрленӗ ресоҫутсире çавӑн ӗçсем çинҫен хӑшхӑш кӑтартусем панӑ. Тӗп Комиттетӑн пленӑмӗ вӑл ӗç тӗлӗшпе çак кӑтартусемпе килӗшет пуҫ тесе шутлатӑп епӗ. Ӗçе кӗртмелли йӗркесене Политтӗк пӳровӗнҫе те, тата кирлӗ Совет оркӑнӗсенҫе те пӑхса тухмалла пулать. Анҫах парттин 14-мӗш конферентсийӗн ресоҫутсинҫе, тата Тӗп Комиттетӑн иртнӗ пленӑмӗсенҫе кӑтартса панӑ политтӗкпа пӗрле, пирӗн хаҫхи решенисенҫе хӑшпӗр орканисатсиллӗ ӗçсене те ҫухӑнсене мӗн

ђул та пулин, патшаланхăн вăйĕ çитнĕ таран, пурлăхпа пулăшас ĕçсене те туса пымалла, мĕншĕн тесен ђухăнсене вăл пулăшу хăйсĕн хуçайствине йусама ытла та питĕ кирлĕ. Вăл ĕçре копператси вăйсăртарах хресђенсен йалти пĕрлешӳллĕ хуçайствисем (комунăсем, йалхуçайстви йулташлăхĕсем) тата йалхуçайствине кретит (кивçен) парас тĕлĕшĕнђен пулăшмалли ытти кирлĕ йĕркесем пысăк усă кӳрĕç.

Йалхуçайствине кивçен парас çĕрте ђухăнсен хуçайствине пуринђен ытла асăрхассисĕр пуçне халђхи вăхăтра пит кирли—вăл уйрăм фонт тăвасси, унăн пур йĕрки те йалти ђухăнсене кивçен парса пырасси пулмалла. Çавăнпек уйрăм фонт ђухăнсене йалхуçайстви ваљђи çăмăл условисемпе, нумай сроклăх кивçен парса, ђăн пулăшмалли йĕркесенђен пĕр пулĕ, вăл вара ытти практиккăллă пулăшусем ваљђи пуçламăшĕ пулĕ. Çавăн пек решшенисене парттин халђ йышăнмалла. Ђухăнсен хуçайствисене кивçен пама кирлĕ укçасене пирĕн тупмалла. Вăл ĕçе епĕр пĕђĕккĕн те пулин пуçласа йарар—ђухăнсен хуçайствине ђăн пулăшмалли йĕркерен вăл пĕри пулаť. Çак ресољутсири пур тумалли ĕçсемпе орканисатсилле кăтартусем çинђен епĕ пурин çинђен те каласа тăмăп. Епĕ каларăм ĕнтĕ, сăмахран У.К. (п) Парттин Тĕп Комиттеђĕн комнесамсене пăсса çĕнĕрен, ирĕклĕ орканисатси тăвас тенĕ ресољутсине ырламалла, мĕншĕн тесен çапла тунипе вĕсем (комнесамсем) йалти ђухăнсемпе вăтам хресђенсене хуçайствăна çĕклес

тĕлĕшпе пĕрлештерсе, вĕсен ĕçĕсене хуçайства ыйтăвĕсем йеннелле йарса тăраççĕ. Ку решшенисем тĕрĕс решшенисем, вĕсем пире халђхи вăхăтăн кирлĕ çĕрти ĕçсене тума пулăшаççĕ. Хĕвелтухăçĕнђи респуплĕксенђи кошђăсемпе ытти çĕрте ђухăнсене пĕрлештерессипе çинђен ресолђутсире тĕп кăтартусем анђах панă. Вăл ыйтăва тытăнса, тата лайăхрах пăхса тухмалла.

Хресђенсен пĕрпĕрне пулăшакан ушкăнсен ĕçĕсем çинђен манăн халĕ нумайах каласмалла пулмасть. Çирĕплетсех калас пулать, хресђенсен пĕрпĕрне пулăшакан ушкăнсем вĕсем—йала пĕрлештерсе тăмалла, халђхи условисенђе вĕсем хресђенсене пĕрпĕрне пулăшас çĕрте пĕрлештерсе, нушталлă пурăнакансене пулăшас çĕрте ђи кирлĕ орканисатсисенђен пĕри пулаççĕ. Ку ĕçре пирĕн пысăк сатађ—вăл орканисатсипе ђухăнсене тимлесерех пĕрлештерессипе, вĕсене çав пĕрпĕрне пулăшакан ушкăнсенђе орканисатсилесси, пĕрпĕрне пулăшакан ушкăнсен ĕçне советсемпе, копператси ĕçĕсемпе çыхăнтарасси. Анђах тĕп орканисатсисем çинђен, советсемпе йалти хуçайства ĕçне тăвакан тĕп орканисатсисем çинђен каласмалла пулсан,— ун пеккисем халђхи вăхăтра советсемпе копперативсемех пулаççĕ. Çапла вара пĕрпĕрне пулăшакан ушкăнсем, комнесамсем тата ђухăнсене пĕрлештерес ĕçре пысăк усă кўрекен ытти орканисатсисем советсемпе копперативсен ĕçĕпе йалти ђухăнсене пĕрлештерме тăрăшмалла, ђухăнсем ăна асăрхаса

ăнланђђăр, советсемпе копперативсем, тата пĕрлешӳллĕ хуçайствăсем, вĕсене пурлăх тĕлĕшĕнђен усă кӳрекеннисем иккенне сисђĕр, тата вĕсемех йалти ђухăнсемпе вăтам хресђенсене пĕрлештерсе, тĕрĕс çул кăтартакан оркăнсем иккенне пĕлђђĕр.

Малашне çĕрпе вăрман ĕçне ĕçлекенсен профсойусĕн ĕçне пит астумалла. Хаљхи вăхăтра ĕнтĕ пирĕн йалта мĕлйун çура йахăн патраксем шутланаççĕ. Çĕрпе вăрман ĕçне ĕçлекенсен профсойусĕнђе патраксен пĕђĕк пайĕ анђах орканисатсиленнĕ. Ман шутпа, çак иртнĕ çулта çуркунне партти йалхуçайствинђе тара тытса ĕçлеттерме ирĕк пани çинђен йăшăннă решшенисенђе—партти çĕрпе вăрман ĕçне ĕçлекенсен профсойус ĕçне ытларах астума каланине, тата ытларах йалти пролеттарисемпе çур пролеттарисене пĕрлештерме кирлине пит астумалла. Вăл ĕçе парттин малашне çителĕклĕ, ку таранђђенхинђен те ытларах асăрхаса тăмалла.

Тата йулашкинђен икĕ сăмах парттин йалти орканисатсисем çинђен. Вĕсем хаљхи вăхăтра партти умĕнђи йăвăр, пысăк сатађсене астуса тăмалли орканисатсисем. Епĕр халĕ хамăрăн йалти, вулăссенђи йађђейккăсен шăйрăксемпе нушталăхсене çителĕклĕ куртăмăр. Анђах пирĕн вĕсен пур ĕçĕсем патне çывхарах пымалла. Уйрăм вырăнсенђе епĕр йалти çийелти сийсене хускатнă çĕрте мĕн çухатнине, „çĕнĕ курспа“ ĕçлеме тытăннă ђухне усă курайманнине, ђухăнсене çĕнĕ майсемпе пĕрлеш-

терес çĕрте ĕçе кĕргмесĕр хăварнине хаҍ тавăрмалла. Йалти парторканисатсисен ĕçне вăйлăлатнă çĕрте пирĕн çак лосăнкпа ĕçлемелле: йалти ҍухăнсене лайăхрах пĕрлештермелле; вĕсене партти тавра пĕрлештерсе, хамăр хыççăн вăтам хресҍенсене йертсе пымалла. Йалта пирĕн партти ĕçне вăйлăлатмалла, пирĕн йалти парттин орканисатсисене пулăшас ĕçе вăйлăлатмалла, вĕсене ĕçлекенсемпе çирĕплетмелле, ĕçе йертсе пыма пулăшмалла, тата вăл ĕçе парттин ытларах астуса пымалла. Йалта пирĕн партти хыççăн, пролеттариат хыççăн хресҍенсенҍен нумайĕшне йертсе пырас ĕçе пирĕн мĕнле те пулин тумалла, пирĕн партти тавра ҍухăнсемпе вăтам хресҍенсене пĕрлештернипе, кулаксене уйрăм тăратса хăвармалла, хăйсем хыççăн йала йертсе пымалла мар тумалла. Епĕр вăл ĕçе тăвайманха, вăл ĕç тĕлĕшпе пирĕн нумай, нумай ĕçлемелле пулаť. Анҍах парттин йал тĕлĕшпе йăшăннă политтĕкĕ, йалта хаҍ ĕçлеме кăтартнă çулсем—ман шутпа, пирĕн малалли ĕçсенҍе тĕрĕс, усăллă ĕçсем кўрĕç.

Хакĕ 18 пус